# САМЕД ВУРГУН

*Азербайджан*

## МАРКС ВИЛТĂПРИ

(Сыпăк)

Хайгет — авалхи масарах Лондонра.
Унта Маркс тăпри вырăнаçнă.
Нимле кĕлетке те лартман: йăм хура
Чул çеç, анчах чапĕ — мăнаçлă.

Чул путнă, çутатнă ăна çумăр та,
Юр витĕр те курăннă чул çав.
Тăван хĕрĕпе юнашар çавăнта
Канать халь учитель, çулпуçĕ.

Тĕме хыçĕнче — сулахай еннелле —
Çап-çутă выртать сулхăн кÿлĕ.
Унта йывăçсем, чĕтренсе çилпеле,
Лараççĕ ем-ешĕл, тем чухлĕ.

Хĕр тытнă час-час ашшĕне аллинчен,
Ак çак çулпала вĕсем тăтăш
Кĕрлен хуларан тухса утнă инçе,
Кăшт сирĕлнĕ хурлăх та шухăш.

Маркс, пур çутçанталăка савнă этем,
Кашни çăлшăнах хĕпĕртенĕ.
Çурхи çилпеле тĕрлĕрен çеçкесем
Чечек тусанне вĕл вĕçтернĕ.

Кашланă вăрман. Çепĕç ешĕл çулçа
Учитель тытса ачашланă.
Нумай хура-шур курнă аслă пуçа
Чи аслă пĕр шухăш кантарнă...

1947